Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* 95 N (4664) *1998 çулхи август (çурла) уйăхĕн 21-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Парăмсене тавăрмалла

*(Тавар кредитне тӳлес ыйту тĕлĕшпе)*

Пĕр вырăнта тăнă, патшалăх колхозсен миллионшар кредитне шутран кăларнă вăхăтсем иртсе кайрĕç, вĕсем историе çеç кĕрсе юлчĕç. Анчах та хальхи условисенче ял хуçалăх кампанийĕн яваплă тапхăрĕнче пуриншĕн те тавар кредичĕпе илнĕ: çунтармалли-сĕрмелли материалсем, запас пайсем - вĕсемшĕн вăхăтлă тӳлемелле. Патшалăх тавар кредитне таварпа тавăрса парассипе килĕшни те лайăх-ха. Ял çыннисен вара тĕп тавар - тырă. Кăçалхи тухăç иртнĕ çулхинчен чылай сахалрах пулин те, тырçинче тăкаксемшĕн тырăпа тӳлесе татас вăхăтсем иртнĕ, маларах та каланăччĕ ĕнтĕ, района тăкаксене хуплама 21 пин тонна тырă кирлĕ, усă курнă кашни кредитшăн мĕнпе расчет тумалли паллă. Тĕпрен илсен, тулăпа, 3000 тонна урпапа тата хăшне-пĕрне ырашпа. Унсăр пуçне, лизингпа илнĕ техникăшăн та тӳлесе татмалла.

Çавăнпа та район ертӳçи хуçалăхсене парăмсене вăраха тăсмасăр парса татмаллине тепĕр хут асăрхаттарать. Хăш-пĕр хуçалăхсем кредитсене саплаштарма тытăннă ĕнтĕ. Августăн 19-мĕшĕ тĕлне "Сĕнче" ассоциаци, сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕ тавар кредитне тулăпа тӳленĕ. Патшалăха кредит шучĕпе панă туллăн çуррине ытла "Алга" ассоциацирен илсе килнĕ. "Татарстан" ыраш парассипе кивçене пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ тӳлесе татнă, Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциаци, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕ урпа парассипе парăма пĕтĕмпех саплаштарнă. Августăн 19-мĕшĕ тĕлне ку тĕллевпе районта патшалăха 1851 тонна тырă панă, вĕсенчен 1524 тонни - тулă. Хăш-пĕр хуçалăхсем тăрăшнипе район парăмĕсене саплаштарнă. Анчах патшалăха тырă сутма пуçăннă хуçалăхсем пурĕ 15 кăна, ыттисем мĕне шаннине вара ăнланма çук.

**Кивçен илнĕ парăмçă** вилмест теççĕ пулин те, çапах та хальхи условисенче патшалăх лару-тăрăвне ăнланмалла тата унăн умĕнчи парăмсене саплаштарма мĕнпур мерăсене йышăнма тăрăшмалла. Мĕнле пăркалансан та çитес çул каллех ăна пуç çапма тӳр килĕ.

## Тырçи паттăрĕсем

Кĕрхи акара хресченсен хуçалăхĕсен "Кондурча" ассоциацийĕнчи **Нафис БИКБАЕВ** малта пырать. Икĕ кун каярах ДТ-75 тракторпа 80 гектар çине акса, вăл смена нормине 235 процент пурнăçланă. Пурĕ 330 гектар акнă.

Унăн юлташĕ **Наиль ГИМАДИЕВ** Т-150 тракторпа кунне 15 гектар çĕртме сухалать, нормăна 1,5 хут тултарать.

Çак хуçалăхри **Зайдулла АХМЕТСАФИН** "ДОН-1500" комбайнпа 2000 центнер ытла тырă çапнă. Кăçалхи çулшăн ку пысăк кăтарту.

## Кукурузăна пухма вăхăт çитнĕ

Выльăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлессинче тата тепĕр яваплă тапхăр çитрĕ. Кукурузăна силоса хывмалла. Çак ĕçе вăраха тăсма юраманнине ăнланакан хуçалăхсем кукурузăна пухса илме тытăннă ĕнтĕ. Ĕнерхи кун тĕлне "Рассвет" тата Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче траншейăсене - 650-700-шер тонна, "Киклĕ", "Урняк" ассоциацисенче тата нефтебазăн хушма хуçалăхĕнче 450-500-шер тонна силос хывнă. Çак ĕçе "Агрохимсервис" АО хушма хуçалăхĕнче, "Кондурча", Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Татарстан" ассоциацисенче те тытăннă. Кузнецов ячĕпе хисепленекен кооперативра 300 тонна хутăш силос хывма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ, ку вăл планпа палăртнин пĕрре пиллĕкмĕш пайĕ.

Ытти хуçалăхсен те çак ĕçе пуçăнма вăхăт çитнĕ.

## "Эпир çăмăл çул шыраман..."



*Анна ачаранах хресчен ĕçне хăнăхса ӳснĕ. Якуркелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан, ют çĕре кайман, тăван ялĕнчех юлнă. Халь унăн ĕç стажĕ 35 çул шутланать, вĕсенчен 16 çулне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес отрасльте доярка ĕçне халалланă.*

*Вăл йывăрлăхсене ӳпкелешме хăнăхман, тăрăшса ĕçлет, 5-6 çул хушши ĕнтĕ хуçалăхри дояркăсем хушшинче малта пырать, пĕлтĕр вара иккĕмĕш вырăн йышăннă.*

*Кăçалхи 7 уйăхра Анна Степановна кашни ĕнерен вăтамран 2555-шер килограмм сĕт суса илнĕ ку - чи лайăх кăтартусенчен пĕри. Халь вăл сăвăм ан чактăр тесе вăйне шеллемесĕр тăрăшать. Унăн ушкăнĕнчи кулленхи сăвăм 13,5 килогрампа танлашать, ку - Якуркел ферминчи вăтам кăтартуран 2 килограмм ытларах. Юлашки вăхăтра хуçалăхра пысăк улшăнусем иртеççĕ - вăл "Надежда" агрофирмăна кĕнĕ. Реформăлассинче тунă çĕнĕ утăм ĕçчене хавхалану хушасса шанас килет.*

*Ӳкерчĕкре: А.С.Портнова доярка.*
*Н.АЗИЗОВ ӳкерчĕкĕ.*

## ОРТ программа - икĕ сехет маларах

**Пĕрремĕш телеканалăн - ОРТ телепередачисен сеткинчи улшăнусем Нурлатра пурăнакансемшĕн пачах кĕтменлĕх пулчĕ.**

**Нурлатри ретрансляторта ĕçлекен Ю.В.Исаевран эпир лару-тăрăва ăнлантарса пама ыйтрăмăр.**




- Мускав вăхăчĕпе ĕçлекен спутник юрăхран тухнипе "Орбита" системинче пире çывăхрах спутниксем шырама тӳр килчĕ. Иккĕшĕнчен пĕринче передачăсем икĕ сехет каярах пулаççĕ, тепринче - икĕ сехет маларах, эпир вара иккĕмĕш варианта суйласа илтĕмĕр. Çакă хăçанччен пырассине вара никам та пĕлмест. Анчах та пĕри кăна тĕрĕс: Мускав пире спутника юсама укçа тенкĕ уйăрса париччен эпир ОРТ "Орбита" системипе пăхăпăр.

Вулакансемпе калаçнă хыççăн телевизор куракансем кăмăлсăр пулни сисĕнмерĕ, пачах урăхла, халь çĕрлехи вăхăтра кăтартакан кăсăк передачăсене курма май пулнипе чылайăшĕ кăмăллă. Кама вара ОРТ программине Мускав вăхăчĕпе пăхма меллĕрех пулсан, хăйсен телевизорĕсене Сергеевск тата ытти станцисене тытмалла тума пултарать.

## Кадрсем улшăннă

**Патшалăх вăрлăх инспекцийĕн çĕнĕ ертӳçи - Рустам Габбасович ШАЙДУЛЛИН.**

## Çутă пур çĕрте çутăсăр

Энергобытăн "Татэнерго" производство пĕрлешĕвĕн Чистайри уйрăмне электроэнергипе усă курнăшăн тӳлеменнипе пысăк парăма кĕнĕ хуçалăхсем тĕлĕшпе чи çирĕп мерăсем йышăнма, кантурсене электросетьрен кăларма тивет. Çак списокра "Тĕрнеç", парăмĕ 162 пин тенкĕ шутланать, Мичурин ячĕпе хисепленекен - 125 пин, "Кондурча" (114 пин), "Родина" (100 пин), "Знамя Октября" (80 пин). Юлашки кунсенче вĕсен çумне Тĕрнеçри спирт завочĕ хушăннă, унăн парăмĕ 125 пин тенкĕрен иртнĕ.

Энергетиксен сăмахĕсем тăрăх, çак утăмсене асăрхаттарас тĕллевпе тунă, каярах хуçалăх объекчĕсене те сетьрен кăларĕç. Çапла ан пултăр тесен, парăмсене тӳлесе татмалли чăн график пулмалла, ăна уйрăма тăратмалла, унтан каллех электроэнергипе усă курма май пулĕ. Пĕр енчен, кăткăс та мар пек. Анчах ĕç финанссемпе çыхăнсан...

Сăмахран, "Кондурча" ассоциаци правленийĕн аппарачĕ 20 кун ĕнтĕ çутăсăр ĕçлет, ыттисем те халлĕхе кирлĕ график хатĕрлемен.

Çав вăхăтрах пĕрремĕшĕсен шутĕнче айăпланă хуçалăхсен списокĕ çĕнĕ потребительсемпе хушăнма хатĕр. Кандидатсем хушшинче "Урняк" ассоциаци, "Первое мая" уйрăм.

Халь кунсем те кĕскелеççĕ, парăмсем ӳсеççĕ, энергетиксен вара чăтăмлăхĕ пĕтнĕ.

Хуçалăхсем вара çутăсăр. Тĕрĕсрех каласан, вутра.

С.НУРУЛЛИНА.

## Поварсене тав

Пирĕн ялти культура çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче кафе ĕçлет. Кунта чылай вăхăт хушши ĕнтĕ Сания Галиуллина хуçаланать. Повар ĕçĕн вăрттăнлăхĕсене вăл халь Люция Зиннатуллинапа кунта практика килнĕ Лейсан Салахована вĕрентет. Хальхи вăхăтра хĕрсем механизаторсемпе комбайнерсене тутлă апат çитереççĕ. Вĕсем тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ, питĕ тутлă пĕçереççĕ, çавăнпа та хăйсен адресĕпе тав сăмахĕсем сахал мар илтеççĕ. Хĕрсем ыйăннине пĕлмесĕр тăрăшăр, пире тутлă апат çитернĕшĕн сире тавтапуç.

**З.ИСМАГИЛОВА.**
**Кăчăканлă ялĕ.**

## "Ильдан" фирма пальто тата курткăсем сĕнет

Районти культура çуртĕнче "Ильдан" фирма тăваттăмĕш кун ĕнтĕ таварсем сутать. Хальхинче хĕлле, кĕркунне-çуркунне тăхăнмалли пальто, тиртен çĕленĕ курткăсем нурлатсене 30 процент мар, 10 процент йӳнерех хакпа сĕнет (часах кĕрхи-хĕллехи сезон çитет вĕт!). Хусансен сăмахĕсемпе, туянас текенсем сахал мар. Ют çĕршывра туса кăларнă тумтир нурлатсене йăлăхтарнă пулас.

# Хамăрăн вăя шута илсе тăрăшмалла

## е Бюджет, налогсем тата ĕçшĕн тӳлесси çинчен

*Республика бюджетне пурнăçласси, бюджет сферин ĕçченĕсене ĕçшĕн тӳлесси, пенсисем парасси çинчен калаçу çивĕчленсе пырать. Халь пурне те йывăр: налог тӳлекенсене те, налог пуçтаракансене те. Шăп çак сăлтавпа Тутарстан Республикин Президенчĕ 1998 çулхи майăн 7-мĕшĕнче "Тутарстан Республикинче предприятисен финанс шайне çирĕплетме тата лайăхлатма экономика условийĕсем тăвас тĕлĕшпе йышăнмалли мерăсем çинчен" указа алă пуснă. Июлĕн 27-мĕшĕнче Хусанта иртнĕ анлă канашлура М.Ш.Шаймиев ялăн вăраха тăсмасăр татса памалли проблемисемпе пĕрлех, социаллă ыйтусем çинче те чарăнса тăни паллă ĕнтĕ. "... Пулăшу кĕтмелли çук. Мĕнпуриншĕн вырăнсенчи ертӳçĕсем явап тытаççĕ. Рынок условийĕсенчен пулса тухакан лару-тăру çавнашкал," - тенĕ М.Ш.Шаймиев.*

*Бюджета пурнăçласси пирĕн мĕнпе çыхăннă, малашне мĕне шанмалла - паянхи "çавра сĕтелĕн" тĕп теми çакăн пек. Калаçăва район бюджечĕпе тӳрремĕнех çыхăннă яваплă та компетентлă çынсем хутшăнаççĕ. Кусем хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн экономика енĕпе ĕçлекен çумĕ - финанс пайĕн заведующийĕ Ф.Н.Губайдуллин. Нурлат районĕнчи патшалăх налук инспекцийĕн начальникĕ Г.М.Миннугалиев, Пенси фончĕн хулапа районăн тĕп уполномоченнăйĕ В.Г.Хоменко.*

"Çавра сĕтел"

**Ф.Н.Губайдуллин:**

- Сӳтсе явмалли тема пĕлтерĕшлĕ - халăхăн пурнăç шайĕ бюджета пурнăçланинчен килет, çавăнпа та пурнăçланипе çыхăннă хăшпĕр самантсене çынсем пĕлсе тăмалла тесе шутлатăп.

Чи малтан 1998 çула бюджета дефицитпа йышăнни çинчен каламалла: унăн тупăш пайне пĕлтĕрхинчен 27485 пин тенкĕ сахалрах планланă пулнă. Тăкаксене, паллах, тупăшсене шута илсе планлама тивет, ку ыйту тĕлĕшпе пирĕн питĕ асăрхануллă пулмаллаччĕ. Çакă вара, чи малтан, бюджет организацийĕсене финанслассине чакарма хистерĕ. Çуллахи юсав тапхăрĕ пуçлансан, чăнчăн тăкаксем палăртнинчен ытлашши пулни палăрчĕ, çакă çулталăк вĕçĕнче пире пĕрлехи дефицитпа хăратать. Бюджета пурнăçлани пирĕн районта, республикăри ытти районсемпе танлаштарсан, чылай лайăхрах пулин те. 1998 çулхи 7 уйăхра унăн тупăш пайне 60537 пин тенкĕлĕх пурнăçланă. Ытларах укçасăр тӳлесе татни бюджет организацийĕсене ĕç укçи тата пенсионерсене пенсисем парассине кăткăслатрĕ. Пире, сăмахран, бюджетниксене ĕç укçи паян 2 уйăх кая юлса пама тивет. Çакăн сăлтавĕсем çинче Гумер Минвалеевич тĕплĕнрех чарăнса тăрĕ.

**Г.М.Миннугалеев:**

- Шел пулин те, налуксене "чĕрĕ" укçапа тӳлекенсем сахалланнăçем сахалланса пыраççĕ. "Нурлатнефтепродукт" АО, банксен уйрăмĕсемсĕр, нефтяниксемсĕр пуçне кашни налуксене тӳлессинче укçасăр формăпа усă курать. Эпир çакна хирĕç мар, мĕн тăвăн - вăхăчĕ çавăн пек. Анчах хăшĕ-пĕрисем çак формăпа та усă курасшăн пулманни кӳрентерет. Сăмахран, кăçалхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне сахăр заводĕнче çак сумма 1118 пин тенкĕ шутланнă, МСОра - 1241 пин, Зузеевăри нефть промыслинче - 1491 пин, машинăсем тăвакан заводра - 1054 пин, маркетинг службин департаментĕнче - 1099 пин. "Агрохимсервис" АО, "Надежда" патшалăх предприятийĕн парăмĕсем 566 пин тенкĕпе танлашаççĕ. Çаксем пурте чи малтан бюджетра палăраççĕ!

Ку - пĕрре. Пирĕн районта ĕç укçи панă хыççăн та предприятисем уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх хунă налука куçарма васкамаççĕ. Калăпăр, сахăр заводĕнче çакăн йышши налук тĕлĕшпе парăм 218 пин тенкĕ шутланать пулсан, унăн пени 1401 пин тенке çитнĕ! Аш комбиначĕ 106,5 пин тенке кивçене кĕнĕ (пени - 57 пин). Çапла майпа, бюджета тепĕр йышши налук кĕресси чакать. Çаксем пурте бюджета хушăнтарассине чарса тăратасси патне илсе пыраççĕ.

**Ф.Н.Губайдуллин:**

- Çакăн пек лару-тăру пурнăç шайне япăхлатать.

**Корреспондент:**

- Ку енĕпе М.Ш.Шаймиевăн сăмахĕсене аса илес килет: "... Малашне кашни регион, хула пенсисем тӳлеме вăл Пенси фондĕнче мĕн чухлĕ укçа пуçтарнă, çавăн чухлĕ илĕ. Мера хаяр, вăл администрацисен пуçлăхĕсене кăна мар, чи малтан Пенси фончĕ,укçапа япăх хушăнакан регионсенчи пенсионерсемшĕн йывăрлăх кăларса тăратать. Анчах бюджетра укçа çук условисенче явап туйман ертӳçĕсене патшалăх урăх йышши витĕм кӳреймест. Апла, вырăнсенче çак йĕркене пăхăнма тивет.

**В.Г.Хоменко:**

- Паллах ĕнтĕ! Кăçалхи 6 уйăхра эпир 33937 пин тенкĕ тӳлерĕмĕр, урăхла каласан, уйрăм укçапа тивĕçтересси 51,5 процент шутланчĕ. "Пенсисем пуçтарăннă страховани взносĕн виçи чухлĕ тӳлесси çинчен" директива 1998 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче кăна вăя кĕчĕ пулин те, пенсионерсем çĕнĕ йĕрке çирĕплĕхне хăйсем çинче туйма ĕлкĕрнĕ. Эпир пенсисене июль уйăхĕшĕн те тӳлеменха. Маларахри çулсенче çакăн йышши фактсем тĕлĕшпе пенсионерсем район ертӳçисене кӳреннĕ пулсан, халь ĕç шайĕ пĕтĕмпех хăйсем тивĕçлĕ канăва кайнă предприятисемпе организацисен ертӳçисенчен килнине ăнланмалла.

Калăпăр, пенсионер-нефтяниксене (А.С.Насолдин, М.М.Хузин), "Нурлатнефтепродукт" АО (Р.Ш.Хафизов), "Росгосстрах-Татарстан" АО Нурлатри филиалне (А.И.Газизуллин), гортопсбыта (В.Н.Кузнецов), госанэпиднадзор центрне (В.И.Андаров), 94-мĕш номерлĕ тĕп аптекăна (А.И.Леснякова), "Нурлаттаз" ЭПУ (Р.А.Хасанов), вăрман хуçалăхне (Ф.М.Минсалимов), "РИТЭКнефть" НГДУ (А.С.Якимов), банксен уйрăмĕсене, Пенси фондне уйăхсерен укçа-тенкĕ куçараканскерсене, ку ыйту малашне те пăшăрхантармĕ. Хăшпĕр отрасльсен представителĕсене вара çак йывăрлăхсемпе час-часах тĕл пулма тӳр килĕ, мĕншĕн тесен агропромышленность комплексĕн предприятийĕсем пирĕн фонда 30083 пин тенкĕ (вĕсенчен 24143 пин тенки хуçалăхсене тивет) парса çитереймен, промышленноçăн - 13893 пин, çул-йĕр тăвакан организацисем - 90809 пин, бюджет организацийĕсем - 5556 пин тенкĕ. Чи пысăк парăмçăсен списокĕнче сахăр завочĕ малта тăрать (8707), МСО (6313 пин), вĕрентӳ пайĕ (3423 пин), "Агрохимсервис" АО, "Сельхозтехника" АО (1656 пин), элеватор (1453 пин), районти тĕп больница (1216 пин), спирт завочĕ (714 пин), районти хуçалăхсем тата ыттисем.

Çакăн пек лару-тăрăва ĕç укçине вăхăтлă тӳлеменнипе кăна ăнлантарни тĕрĕс мар пулĕ. Банксен клиенчĕсем, укçа илнĕ хыççăн та Пенси фондне куçармаççĕ, куçарсан та пĕр пайне çеç. Сахăр завочĕ, элеватор, аш-какай комбиначĕ, "53-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж управленийĕ" ООО, çул-йĕр тăвакан управлени, геофизика, машинăсем тăвакан завод, спирт завочĕ, "Сельхозтехника" АО, сĕт-çу комбиначĕ, "Надежда" патшалăх предприятийĕ тата ыттисем çапла тăваççĕ. Чăнах та, Пенси фончĕ парăмçăсем тĕлĕшпе хăйĕн витĕмлĕ меслечĕсемпе усă курма тăрăшать. 1998 çулхи пĕрремĕш кварталта çеç тӳлеменнисем тĕлĕшпе штраф сумми 7,7 миллион тенкĕ шутланнă. Анчах та çакăн пек мерăсем, паллах ĕнтĕ, пенсионерсен лару-тăрăвне лайăхлатмаççĕ. Шăп кăна çавăнпа ĕнтĕ, юлашки вăхăтра пенсионерсене пенси шутĕнчен тивĕçтерме тăрăшатпăр. Хальхи вăхăтра çакăн пек системăпа вăрман хуçалăхĕ (вутă парать), нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени тата вăрман хуçалăх ОРСĕсем (таварсем), РСУ (хăйсен магазинĕсем урлă апат-çимĕç параççĕ), кирпĕчĕ завочĕ (кирпĕч), сахăр завочĕ (сахăр песукĕ), хуçалăхсем (çу), аш-какай комбиначĕ (хăйсен магазинĕ урлă аш-какай продукчĕсем), çыхăну узелĕ (телефоншăн тӳлесси), МПП (коммуналлă услугăсемшĕн) ĕçлеççĕ. Çакна та каласа хăвармалла, ТР Министрсен Кабинечĕн 1998 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕпе килĕшӳллĕн, предприятисемпе организацисем Пенси фондне чылай вăхăт хушши тӳлеймесен хăйсен продукцине пасартинчен йӳнерех хакпа пама пултараççĕ. Пĕр енчен ку вĕсемшĕн те усăллă, тепĕр енчен - ку пенсионерсене те пысăк пулăшу.

**Корреспондент:**

- Калаçура палăртнă тăрăх, ĕç укçи, пенси, налук пухас тĕлĕшпе ĕçсем пирĕн районта лайăхах мар. Çакă вара вăхăтлăх пулăмĕ мар, çавăнпа та ыран лайăхланĕ-ха тесен тĕрĕс пулмĕ...

**Ф.Н.Губайдуллин:**

- Производство чаксан, тăкаксем ӳсеççĕ - кунта, паллах, лайăххине шанмалли çук ĕнтĕ. Сăмахран, тырпул тухăçĕ кăçал кĕтнинчен начартарах - ку отрасльте мĕн лайăххине кĕтмелли пур-ши? Çавăнпа та бюджет шучĕпе пурăнакан учрежденисен нушисене тивĕçтерессе уйăхсерен кăткăсланать. Ĕç укçи, пенси, пособисем вăхăтлă паманнине кам та пулин памасть тесе шутламалла мар, ăна экономикăн черетлĕ тĕрĕслевĕ пек йышăнмалла. Лару-тăрăва лайăхлатас тесе тăрăшса, район ертӳçи май пуррине пурне те тăвать. Вырăнти ертӳçĕсем те çак ыйтăва ăнланни кирлĕ. Эпир хамăр вăя шута илсе ĕçлеме хăнăхатпăр пулас, анчах та малашне пачах вăйсăр юлас марччĕ... - ан тив, çакă ертӳçĕсенчен кашнине паянах шухăшлаттартăр.

"Çавра сĕтел" хушшине
пуçтарăннисемпе
С.ХАЙРУЛЛИНА
калаçнă.

---

**Коммуналлă хуçалăхра улшăнусем**

# МПП,ЖЭУ тата эпир

***Çитес çывăх вăхăтра хваттершĕн укçа тӳлес тесен, çурт-йĕр хуçисене хулан пĕр вĕçĕнчен теприне, сăмахран, сахăр вĕретекенсен поселокĕнчен Кăрмăш микрорайонне çити кайса вăхăт иртерме тӳр килмĕ - çакна хамăрăн çурт-йĕрпе эксплуатаци управленийĕнчех пурнăçлама пулать, тесе шантарать халăха МПП начальникĕ А.К.ГАЙНУЛЛИН.***

***- Çурт-йĕрпе эксплуатаци управленийĕсем (ЖЭУ) ăçта вырнаçнă тата хваттершĕн укçа йышăнассисĕр пуçне вĕсен ĕç сферине мĕн кĕрет? Çак ыйтусем çине хуравлама килĕшрĕ МПП начальникĕ.***

- Пысăк хуласенче тахçанах ĕнтĕ хула территорине ЖЭУ çине пайласа тивĕçтерес практикăпа усă кураççĕ. Пĕр ЖЭУ нормăпа пурăнмалли 50 пин тăваткал метр тивĕçтермелле. Ведомствăна пăхăнса тăракан çурт-йĕре МПП балансĕ çине куçарнă май унăн пурăнмалли фончĕ чылай ӳснĕ, халь 236 пин тăваткал метра яхăн шутланать, ЖЭУ йĕркелени услугăсем парассине тивĕçтерме май парать. Нурлат статусне улăштарнă хыççăн çак ыйту тата та çивĕчленчĕ. Пурăнмалли лаптăка шута илсе 6 ЖЭУ йĕркелеме шутлаççĕ. Сăмах май каласан, вĕсенчен тăватташне кадрсемпе комплектланă ĕнтĕ, тĕпрен илсен, çуртсем çумĕнчи территорисене, картишсене, газонсене тирпейлесе тăраççĕ, вĕсенче йĕрке тытассишĕн тăрăшаççĕ, коммуналлă услугăсем параççĕ. Касса аппарачĕсем пулманнипе кунта халлĕхе çурт-йĕршĕн тӳлев йышăнма пултараймаççĕ. Сахăр завочĕн, НГЧăн, "Сельхозтехника", "Татсельхозмонтаж" АО, "Агрохимсервис" АООТ çурт-йĕр фондне МПП балансĕ çине куçарса пĕтерсен (шыв тата канализаци системисем тата ытти юсавсăр пулнипе çак ĕç халлĕхе чарăнса тăрать-ха) пиллĕкмĕшпе улттăмĕш ЖЭУ йĕркелĕç. Кашни ЖЭУ штатĕнче мастер, паспортист, кассир, сварщик, слесарь, дворник - пурĕ 15 çын. Çурт-йĕрпе эксплуатаци управленийĕсем Козлов урамĕнчи 15-мĕш, Дружба урамĕнчи 75-мĕш тата Советская урамĕнчи 124-мĕш çуртсен путвалĕсенче вырнаçнă. Ытти виçĕ управленин адресĕсем паллă мар-ха, вĕсем Школьная урамĕнче, сахăр вĕретекенсен тата чугун çул ĕçченĕсен поселокĕсенче пулĕç. Вĕсен пӳлĕмĕсене телефон лартман-ха, анчах ку ыйтăва çитес çывăх вăхăтра татса парĕç.

ЖЭУ йĕркеленипе МПП слесарьсемпе дворниксен штатне икĕ хут ӳстернĕ. Хула статусне улăштарни администраци çурчĕсем çывăхĕнче тасалăх тытассипе газонсене тирпей-илем кĕртессипе, симĕслентерессипе ĕçлекен тата тепĕр служба анлăлатма май панă.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

# Шăланпа çĕмĕрт

**Новелла**



Сĕм вăрман пĕр чарăнми кашланă. Йывăç тăррисем пысăк тинĕс хумĕ пек кар тăрса пĕр вĕçĕм шавланă, ĕмĕрхи ыйтăвăм хуравне тупасшăн пек пĕрпĕринпе тавлашнă тейĕн. Мĕн-ши вăл пурнăç тени? "Пурнăç вăл вĕçĕ хĕррисĕр кĕрешӳ," - тенĕ пин çулхи ват юман. Вăрман чăтăмлăхĕнче ӳсекен кашни йывăçăн этемĕнни пек хăйне май шăпи пулнăран, пурнăç пирки те хăйĕнле шухăшланă. "Акă, çутă патне кармашса çитемха, вара калăп ун чух мĕн вăл пурнăç иккенне," - тенĕ çинçе кăна пилеш хунавĕ капмар та лаштра йывăççем хушшинчен аран-аран сăрхăнса кĕрекен хĕвел пайăрки патне туртăнса, авăнса, тĕрлĕ кукăр-макăр çулсем туса. Çапла хăйĕн асапĕпе, нушипе кĕрешсе ĕмĕрĕ иртнине те сисеймен вăл.

Хĕвеллĕ те çутă уçланкăра çурхи пĕр илемлĕ кун çинçе çĕмĕртпе шăлан тĕмĕ çеçкене ларнă. Шурă пĕркенчĕк айĕнчи пике пек çĕмĕрт кăмăлĕпе те йăваш пулнă. Çын ăçталла туртать, çавăнталла авăнать вăл. Илеме вара пурин куçĕ те курать, алне тăсать. Пĕри пĕр çеçкине татать, тепри - тата теприне... Шăлан чечекĕ вара хăй хакне аван пĕлнĕ. Ахальтен мар вăл йĕплĕ. "Илеме куçпа курса савăнма тунă", - тенĕ вăл.

Пурнăçра яланах çуркунне килмест. Кĕр кунĕн те черетпе хăйĕн вăхăчĕ пур. Уçланкăри шăлан хăйĕн сиплĕ те тулăх çырлипе çынсене савăнтарнă. Çурхи кун хăй çеçкине упрайманнипе халĕ хăр тăлăххăн ларакан çĕмĕрте вара асăрхаканĕ те пулман. Хаш сывланă вăл ăмсанчăклăн пăхса хăй кӳрши çине.

"Эсĕ телейлĕ, - тенĕ вăл шăлана. - Турри хăй сана çак телее курма тунă. Манăн шăпа кĕнеки çине вара çапла хурлă пулмалла тесех çырнă пулĕ". "Çук, эсĕ йăнăшатăн, - хуравланă шăлан. - Çутçанталăкĕ мана та, сана та çак телее курма тунă, анчах эсĕ ăна вăхăтĕнче ху упрама пĕлеймерĕн".

**Елена АДОНЕ.**

# Пĕлтерӳсем

## Сутатпăр:

**УАЗ-3303 тентланă автомашина, 1996 çулта туса кăларнă УАЗ-3962 (санитарка). Адрес: Аксу поселокĕ, 60 лет Октября урамĕ, 3-мĕш çурт. Телефон:2-18-07.**

* * *

**Сӳтмелли 5,5х10 калăпăшлă ултă кĕтеслĕ çурт. Пĕчĕк Хăмăшлă ялĕнче Аввакумовран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**УАЗ-469. Ленинградская урамĕнчи 2а çуртри 3-мĕш хваттерте хăть хăш вăхăтра та ыйтса пĕлме пулать.**

* * *

**Туй кĕпи, хаклă мар. Телефон: 5-32-01.**

* * *

**Дача (сахăр вĕретекенсен поселокĕ). Телефон: 2-10-57.**

* * *

**Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер, васкавлă. Телефон: 5-28-32.**

* * *

**Çĕнĕ çурт, сӳтме те пулать. Самар облаçĕнчи, Чаллăпуç районĕнчи Сителĕ ялĕнче Илья Абрамовран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Советская урамĕнчи лайăх гараж вырăнĕпе, кивĕ çурт (чугун çул поселокĕ). Советская урамĕнчи 139-мĕш номерлĕ çуртри 5-мĕш хваттерте 16.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлме пулать.**

* * *

**1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108, васкавлă. 8.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен 2-23-28 номерпе шăнкăравламалла.**

* * *

**Кӳмеллĕ "ИЖ-Юпитер-5" мотоцикл тата трельяж. Телефон: 2-16-87.**

* * *

**Некрасовка поселокĕнче дача: Телефон: 5-22-81.**

* * *

**1995 çулта туса кăларнă питĕ лайăх шайри ВАЗ-2121, васкавлă. К.Маркс урамĕнчи "Автозапчасти" магазинта ыйтса пĕлме пулать.**

* * *

**Хĕвелтухăç микрорайонĕнче строительство материалĕсемлĕ строительство участокĕ. Адрес: Дружба урамĕ, 35, телефон: 5-11-47.**

* * *

**"Москвич" автомашина. Телефон: 5-22-79.**

* * *

**Кивĕ Чаллăра дача. Телефон: 5-19-92.**

## Тара паратпăр:

**ГАЗ-52 пĕр çулталăка (малтан тӳлесе). Августăн 30-мĕшĕнче 60 лет Октября урамĕнчи 9-мĕш номерлĕ çуртри 7-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Сĕтел-пукансемлĕ пĕр пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон: 2-20-80.**

## Тĕрли:

**Çамрăк çемье хваттер тара илет. Телефон: 3-04-50.**

* * *

**Туса пĕтермен кирпĕч çурта хваттерпе улăштаратпăр е сутатпăр. Телефон: 2-22-49.**

# Редакци почтинчен

## Дружба урамĕпе аякка кайма çук

**- Алло, ку редакци? Сирĕн пата Кăрмăш микрорайонĕнче пурăнакан Алексеева шăнкăравлать. Ку ыйту мана çеç мар, Дружба урамĕпе çӳрекенсене пурне те кăсăклантарать. Иртнĕ çул кĕркуннех кунта пурăнакансем ыйтнипе канализаци пăрăхĕсем хывма тытăнчĕç, шыв пăрăхĕсенчен хăшне-пĕрне улăштарчĕç - мĕнех вара, кирлĕ ĕç. Анчах та НГДУ ОРСĕн "Апат-çимĕç" магазинĕ патĕнчен пыракан çула пĕтĕмпех юрăхран кăларнă, утма май çук - шăтăк-путăк. Бульдозерпа та тикĕслерĕç, анчах та усси пулмарĕ. Çавăнпа та пире çаврăнăш çулпа, Советская урамĕпе утма тӳр килет. Коммуникаци хывас ыйтăва татса панă чухне вара çула асфальт сарма, тротуарсем тума шантарчĕç. Часах кĕркунне çитет, çумăр çума тытăнать вĕт. Çула вара асфальт сарĕç-ши, çук-ши?**

Официаллă инстанцисенчен пĕлтернĕ тăрăх, ку çула тăвассине 1999 çулта пурнăçламалли ĕçсен планне кĕртнĕ. Ку ĕçе пурнăçланăшăн нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени тӳлĕ, ĕçе вара РСУ тăвĕ тесе пăхса хăварнă. Эппин, кăшт кĕтер-ха?

## Çуртăн картишĕ çук

Эпир Школьная урамĕнчи 13-мĕш номерлĕ çуртра пурăнатпăр. Пирĕн картиш çукки пурне те пăшăрхантарать. Апла пулсан, кĕпе-йĕм типĕтмелли вырăн та çук. Çитменнине, çумлах икĕ гараж туса лартрĕç, кашнинче - бензин емкоçĕсем. Çавăнпа та эпир çак гаражсен хуçисене вĕсене унтан илме ыйтатпăр. Пирĕн те автомашинăсем пур вĕт, апла пулсан пурин те çавăн пек гаражсем туса лартмалла-и?

**Школьная урамĕнчи 13-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакансем, пурĕ виççĕн алă пусnă.**

*Уяв юррисем*

## Мул сыхлаç те мул тытаç

Тĕклĕ уралла тăмана,
Тĕклĕ уралла тăмана
Арпалăхра чĕп сыхлать,
Арпалăхра чĕп сыхлать.

Леш кассенĕн каччисем,
Леш кассенĕн каччисем
Тăкăрлăкра хĕр сыхлаç,
Хĕр сыхлаç те хĕр тытаç.

Хамăр кассен ачисем,
Хамăр кассен ачисем
Ашшĕ килĕнче мул сыхлаç,
Мул сыхлаç те мул тытаç.

Мулĕ юрĕ хĕр илме,
Хĕрĕ юрĕ выляма.
Ачи юрĕ çурт тытма,
Çурчĕ юрĕ пурăнма.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.

*Хĕле хатĕрленетпĕр*

## Десерт помидорĕ

Маринад валли: 0,5 литр шыва 1 чей кашăкĕ тăвар, 3 чей кашăкĕ сахăр, 1-2 лавр çулçи, 2-3 хура пăрăç пĕрчи, 2-3 гвоздика ямалла та пĕрле 3 минут вĕретмелле, хыççăн марльăпа сĕрмелле. Пĕр чей кашăкĕ желатин (ăна малтан 10 чей кашăкĕ шыв ярса шӳтермелле), уксус хушмалла. Çуса тасатнă, стерилизациленĕ 1 литрлă банкăна 1 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, 2 лавр çулçи, 3 хура пăрăç пĕрчи ямалла, помидорсене (вĕсене ваклама та юрать) тултармалла, çиелтен пуçлă сухан турамĕсем хумалла. Маринад ярса банкăна тимĕр хупкăçпа витмелле те кастрбюль çине лартса (тĕпне кивĕ япала хумалла) 5-10 минут стерилизацилемелле, тимĕр хупкăçсемпе питĕрсе лартмалла.



## Хăярпа помидор салачĕ

Маринад валли: 4 литр шыва 7-8 лавр çулçи, 3-4 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, хура пăрăç пĕрчисем, 1 стакан сахăр, 0,5 стакан тăвар ярса вĕреме кĕртмелле.

Çуса стерилизациленĕ банкăна сийĕн-сийĕн çаврашкасемпе туранă сухан, хăяр, помидор, унтан каллех сухан хумалла. Тултармалла та маринад ярса тимĕр хупкăççемпе витмелле. Кастрюльти шыва лартса 5-8 минут стерилизацилемелле, уксус ярса хупмалла.



# Пĕлтерӳсем

## Тĕрли:

**4-мĕш номерлĕ шкул Ринат Юсупович Мустафин ячĕпе панă А 2914101 номерлĕ аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.**

* * *

**Хăтлă 1 е 2 пӳлĕмлĕ хваттер (сĕтел-пуканлă) тара илетĕп. Телефон: 2-23-27, 20 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

**Мрамор тĕпренчĕкĕсенчен тунă палăксем тăватăп. 1-2 кун хушшинче çырса пыратăп, гранит çине портрет вырнаçтаратăп. Адрес: Ленинградская урамĕ, 14. Свидетельство Б-324.**

* * *

**Октябрь ПМК "Мелиорация" АОра ĕçлеме бульдозер машинисчĕ, скрепер машинисчĕ, автокран машинисчĕ кирлĕ, ĕçленĕ тăрăх тӳлеççĕ.**

* * *

**"Колос" ресторанта ирхине 8 сехетрен пуçласа çĕрле 2 сехетчен сăра барĕ ĕçлет.**


## Лайăхраххине суйлăр!

**Эсир хăвăрăн хваттерĕр дизайнне улăштарас, хăвăрăн тата çывăх çыннăрсен кăмăлне çĕклес тетĕр-и? Ку питĕ ансат. Хăтлă пултăр тесен тĕрлĕ элементсен тĕсне суйласа илмелле: питĕ илемлĕ портьерсем, чĕнтĕрлĕ тюльсем, пледсем, питĕ илемлĕ çивиттисем. Çаксене пурне те эсир Школьная урамĕнчи 8-мĕш номерлĕ çуртри (Йăла çурчĕ, 1-мĕш хут) çĕнĕ "Айгуль" магазинра тупăр.**

## "Интерьер-Плюс" хыпарĕсем

**"Интерьер-Плюс" таварсен ассортиментне анлăлатни çинчен кăмăлшах пĕлтерет. Халь кунта эсир электричествăпа шыв ăшăтакан хатĕрсене суйласа илме пултаратăр (Atmor, Lsea, Euro plus); Испанире туса кăларнă Atmor газ колонкисем; алăксем (Испанире тата Финляндире тунă); шпалер(A.S.Creation); керамика плитасем, çаплах капăрлатмалли материалсем суйласа илме пулать.**



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3309